Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

37 (8103) № * Юн кун, 2013 çулхи çу (май) уйăхĕн 29-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Çур аки – 2013

## Çĕр улми пуссисенче

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тыръ-пулă акас ĕç вĕçленнипе пĕрлех «иккĕмĕш çăкăр» лартассипе ĕçсем массăллăн пуçланчĕç. Уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн çĕр улми лартакан хуçалăхсем ăна çу уйăхĕн 28-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 650 гектара яхăн лартнă. Ку ĕç районта вĕçленсе пырать.

## Çум курăкпа кĕрешеççĕ

Çур аки вĕçленсе пынă май çĕр ĕçченĕ акнă-лартнă культурăсене пăхса ӳстерессине, унти çум курăкне тата сăтăрçăсемпе кĕрешессине малти вырăна кăларать. Иртнĕ ытлари кун тĕлне районĕпе тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсен анисем çинчи çумпа кĕрешсе 1500 гектара яхăн ĕç пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе хальлĕхе «Герой», «Оринино», «Свобода», «ВаСем» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе А. Афанасьевăн тата А. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ытларах ĕçленĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Районăн ĕçчен çыннисем

## Тăрăшуллă механизатор



*Ĕçлекенсене ырăпа палăртасси тата ыттисемĕн тĕслĕх вырăнне лартасси кашни ĕç коллективĕнчех кулленхи ырă йăла шутланать.*

*– Çĕнĕлĕхсене алла илекенсем хушшинче ĕçе юратакансем пулни пирĕн предприяти те хăйĕн ответлăхне çухатманнине çирĕплетет. Кулленхи ĕçсенче тракторист-машинистсен ĕçри хастарлăхĕнче, вĕсем ĕç дисциплинине хăй еккипе яманнинче предприятин малашлăхне куратпăр, – терĕ Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ертӳçи С. Тимофеев кĕске калаçура. Хăйĕн сăмахĕнче вăл кунта 25 çул механизаторта ĕçлекен Владимир Хлашева (сăн ӳкерчĕкре) тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ. Экскаваторпа вăй хуракан Владимир Алексеевич хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçланипе палăрса тăрать.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Раççейре

## 2014 çул – Культура çулталăкĕ

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин кăçалхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкĕ ирттересси пирки» Хушу кăларнă.**

Унпа килĕшӳллĕн 2014 çула Раççейре Культура çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Çапла тума хистенĕ тĕллевсем пархатарлă: обществăна культура аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе кăсăклантарасси, культурăпа истори еткерне сыхласа хăварасси, тĕнчере Раççей культура витĕмне çĕклесси.

Тӳрĕ лини иртнĕ

## М. Игнатьевпа – уçă калаçу

Майăн 27-мĕшĕнче Чăваш Наци радиовĕн эфирĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тӳрĕ лини иртнĕ.

Тӳрĕ лини пуçланиччен 900 яхăн ыйту йышăннă. Хисепне пăхсан пĕрремĕш вырăнта – «Ĕç ветеранĕ» ят парас, гражданнсене кивелсе çитнĕ çурт-йĕртен куçарас ыйтусем. Иккĕмĕшĕнче – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхри, социаллă çурт-йĕр тăвассипе, коммерци мелĕпе хваттер тара илмелли программăпа, ялта çулсем тăвассипе, юсассипе, ача сачĕсенчи черетсене пĕтерессипе çыхăннă ыйтусем. Çавăн пекех нумайăшне ĕç укçине ӳстерес, граждансен уйрăм категорийĕсене çăмăллăхсем парас ыйтусем канăçсăрлантараççĕ.

Республика кунĕ

## Выставкăна та, форума та хутшăнатпăр

Муркаш районĕ «Регионсем – чикĕсемсĕр килĕштерсе ĕçлесси» выставкăна хутшăнма хатĕрленет. Вăл Республика кунĕн виçинче Шупашкарта июнĕн 19 – 23-мĕшĕсенче иртет.

Выставкăна хутшăнас ыйтăва ĕнер йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. «Муркаш районĕ: аталанма майсем туса паратпăр» концепципе выставкăна хутшăнма палăртнă. Районта уйрăм бизнеса аталанма площадкăсем хатĕрленĕ. Ял туризмне аталантарма та майсем пур. Çаксем çинчен уйрăммăн палăртса каласа парасшăн Муркашсем.

Июнĕн 18 – 19-мĕшĕсенче иртекен экономика форумне хутшăнас ыйтусене те тишкернĕ. Кунта та Муркашсем активлă хутшăнма палăртаççĕ.

Районта

## Экзаменсем пуçланчĕç

Тунти кун пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем пуçланчĕç. 11-мĕшсен пĕрремĕш экзамен вырăс чĕлхипе иртрĕ, ăна кăçал шкул пĕтерекен 243 выпускник тытрĕ. Экзамен вырăнне Муркашри вăтам шкул тесе çирĕплетнĕ. Экзамен пыракан классенче тата коридорсенче требованисемпе килĕшӳллĕн видеосăнав оборудованийĕсене вырнаçтарнă.

Ĕнер вара 9-мĕшсен патшалăх аттестацийĕ пуçланчĕ. 371 çамрăк пĕрремĕш экзамена математикăпа тытрĕ. Тăхăрмĕшсен ĕçĕсене районта йĕркелнĕ комисси тĕрĕслет.

## Тĕллевлĕ усă кураççĕ

Амăш (çемье) капиталĕ ăна çирĕплетекен саккун вăя кĕнĕренпе 250 000 тенкĕрен паян 408960 тенкĕ таран ӳсрĕ. Пирĕн районта ăна тивĕçекенсенчен çуррине яхăн – пурĕ 190,02 миллион тенкĕлĕх 607 заявлени çырнă – капитал укçи-тенкипе усă курнă.

Ытларахăшĕ çак пулăшупа пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. 439 çемье ипотека кредичĕсене саплаштарнă, 151 çемье – суту-илӳ килĕшĕвĕ тăрăх пурăнмалли лаптăк туяннă, укçа-тенкĕне пӳрт тунă е ăна реконструкцилеме çĕре хывнă, çурт-йĕре пая кĕрсе туяннă, хăпартнă пӳртшĕн е ăна реконструкцилеменĕшĕн компенсаци мелĕпе илнĕ. Çак укçа-тенкĕпе усă курса асла çулхи ачасене вĕрентме 16 çемье кăмăл тунă.

## Марафон вăй илет

«Раççей ача-пăча фончĕ» обществăлла организацин Чăваш Енри уйрăмĕ пуçарнипе йĕркеленĕ «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафон малалла пырать.

Пирĕн районта пурăнакансем, кунта вырнаçнă предприяти-учрежденисем тата организацисем хывнă укçа майăн 23-мĕшĕ тĕлне 40812 тенкĕпе танлашнă, малтанхи эрнерипе танлаштарсан кăшт ӳснĕ. Ырă тăвас текенсем кая юлман, марафон счечĕ çине укçа-тенкĕ куçарма хальлĕхе никам та кая юлман.

Республикипе пурĕ 6 миллион та 707 пин те 866 тенкĕ пухăннă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Июнĕн 15-мĕшĕнче – 60-мĕш Акатуй

Уява йыхравлатпăр!

Кăçал çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ ятпа йĕркелекен районти ĕçпе юрă тата спорт уявĕ 60-мĕш хут иртет.

Мĕн авалтанпах ял çынни çуркунне сухапа ака уявне - Акатуйне пуханнă. Ăна хаваслă юрă-ташăпа, тĕрлĕ вăйă-ăмăртупа уявлană.

60-мĕш Акатуйне чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаçат никĕслевçи Н.В. Никольский çуралнăранпа 135 çул çитнине халалланă. Уяв программи пуян та тĕрлĕ енлĕ.

Акатуйне хатĕрленсе ирттерес ыйтăва тунти кун йĕркелӳ комитечĕ хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе яврĕ.

– Пурте кăмăллакан çак уява кăçал Лантăш вăрманĕн уçланкинче ирттерме палăртрăмăр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев. – Ăна çӳллĕ шайра йĕркелеме паянах ĕçе тытăнмалла.

Юбилей Акатуйĕ уçланкăра 10 сехетре художество пултарулăх коллективĕсем юрă-кĕвĕ çеммипе утнипе пуçланать. Хысçăн хресчен ĕçне кĕвĕпе ташă композицийĕ чысласть.

11 сехет те 5 минутра уява район пуçлăхĕ Игорь Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев уçаççĕ. Çурхи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май ĕçре мала тухнисене сцена çине чĕнсе Хисеп хучĕсемпе хаклă парнесем параççĕ. Яланхи пекех ĕç династийĕсене чыслаççĕ. Нумай ачаллă çемьесен амăш капиталĕн сертификачĕсене тивĕçеççĕ.

Концерт программи пуян. Пĕрлештерĕ хор юрри-кĕвви мăнаçлăн янăрĕ. Пултарулăх тата ача-пăча коллективĕсем хăйсен ăсталăхĕпе савăнтарĕç. Карусельпе тĕрлĕ аттракцион та сире кĕтеççĕ.

Спорт вăййисене кăмăллакансем тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнма пултараççĕ: пăт пуканĕ çĕклесси, алă вăйне виçесси, турник çинче туртăнасси, кĕрешӳ тата ытти те. Бокс вăййине кăмăллакансем вара ăстасем вăй виçнине пăхĕç. Волейбол финал вăййисене кăçал районăн хисеплĕ гражданинне Владимир Рубцова асăнса ирттереççĕ.

Хресчен йăли-йĕркипе паллашма та кăсăклă пулĕ. Кашни ял тăрăхĕ хресчен кил картишне чĕнет. Кунтах чăваш апат-çимĕçне астивме май килĕ. «Чи лайăх кил картишĕ» конкурс çĕнтерӳçине жюри палăртĕ.

19 сехетре уяв Муркашра малалла тăсăлать. Ял çыннисемпе хăнасене концерт, тĕрлĕ конкурссемпе вăйăсем кĕтеççĕ. Уява фейерверк вĕçлĕ.

Пурне те Акатуя чĕнетпĕр!

## Çĕр – тĕп пуянлăх

Çĕр ыйтăвĕпе

Хальхи вăхăтра çĕр çавăнăшĕн сферинче законодательствăна пăхăнасси тата граждансен саккунлă интересĕсене хӳтĕлесси влаç органĕсен тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. Çавна май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев майăн 27-мĕшĕнче Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци территори органĕсемпе муниципалитетсен хăш-пĕр ертӳçисемпе ирттернĕ канашлăвне те çак ыйтуран пуçланă.

Республика Пуçлăхĕ çавна палăртнă. Майăн 23-мĕшĕнче кассаци инстанцийĕн сучĕ пулнă. Вăл Муркаш районĕнчи Катькас ялĕ патĕнчи 118 гектар çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе республикăра пурăнакансен тата республика çыннисен саккунлă прависене çирĕплетессипе Чăваш Ен Правительстви тунă ĕçсене тĕрĕс тесе хакланă. 2007 çулхи декабрь уйăхĕнче ку çĕре 49 çуллăха коммерци организацине арендăна панă пулнă. Килĕшӳ тунă чухне саккун йĕркисене пăснă. Виçĕ çул иртнĕ хысçăн Муркаш район администрацийĕ çак фирмăпах çĕнĕ килĕшӳ тунă, ку хутĕнче вара асăннă çĕр лаптăкне сутассипе. Кадастр хакĕпе 1,8 миллион тенкĕлле (1 сотки 152 тенкĕ) автоçул, газопровод тата инженери коммуникацийĕсем вырнаçнă сывăхĕнчи çĕрсене сутса янă.

«Эпĕ пĕрре кăна каламан, халĕ те çавна калама ывăнмастăп, республикăн тĕп пуянлăхĕ, ресурсĕ вăл – çĕр. Çавăнпа та çĕр çавăнăшĕн сферинче законодательствăна пăхăнасси тата граждансен саккунлă интересĕсене хӳтĕлесси влаç органĕсен тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. 2010 çулччен çĕр законодательствине пăснă тĕслĕхсем сахал мар пулни паян уççăнах курăнать. Çавна пула чылай çĕр участокĕсем усламçăсен аллине çакланнă. Ку çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курмаççĕ тата вĕсем мăян айне пулаççĕ. Çав вăхăтрах муниципалитетсем территорисене аталантарма е инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртме, нумай ачаллă çемьесене тивĕçтерме ирĕклĕ çĕр çуккипе аптăраççĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев тата çавна палăртса хăварнă: çӳлте асăннă 118 гектар çĕре конкурс йĕркипе тата тӳлевсĕрех нумай ачаллă çемьесем валли çурт-йĕр тума уйăрĕç.

Канашлура укçа-тенкĕпе, çуллахи вăхăтра ачасене шыва кĕме ятарлă вырăнсем туса парассипе çыхăннă тата ытти пирки те ыйтусем сӳтсе явнă.

# Энергоресурссене шута илни кирлĕ

**Ыйтусене министр хуравлать**

*Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ирттернĕ канашлура нумай хваттерлĕ çуртсене энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли приборсемпе тивĕçтерессипирки сăмах пынăччĕ. Асăннă ыйтăва сӳтсе явнă май энерги перекетлессипе ĕçсене лайăххрах йĕркелеме кирлине палăртнăччĕ. Çак хушу мĕнле пурнăçланни пирки Чăваш Ен строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствин ертӳçи Олег МАРКОВ каласа парать:*



**– Олег Иванович, хăш районсенче çуртсен энергоресурссене шута илмелли пĕрлехи приборĕсене вырнаçтарас ĕçсем вĕçленнĕ-ха?**

– 2013 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне муниципаллă 9 йĕркеленӳре ку ĕçсене вĕçленĕ. Вĕсен шутĕнче Улатăр, Элĕк, Патăрьел, Канаш, Муркаш, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк тата Тăвай районĕсем. Çак кун тĕлне нумай хваттерлĕ çуртсене энергоресурссене шута илмелли приборсемпе тивĕçтересси 93,93 процентпа танлашать. Вăл шутран хутса ăшăтнине шута илмелли приборсемпе тивĕçтересси – 88,82 процент, вĕри шыв парса тăнине шута илмелли приборсемпе тивĕçтересси – 96,35 процент, сивĕ шыв парса тăнине шута илмелли приборсемпе тивĕçтересси – 86,45 процент, электроэнергие шута илмелли приборсемпе тивĕçтересси – 99,55 процент.

**– Палăртнă задачăсене пурнăçлани энергие перекетлениpe пĕрлех тата мĕн енпе меллĕ пулса тăрать-ха?**

– «О фонде содействия реформированию жилищно-коммунального хозяйства» 185 № Федераци саккунĕн 14-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Фонд шучĕпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене паракан укçатенкĕ пулăшăвне тивĕçес тесен заявкăна 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен парас пулсан электричество тата ăшă энергийĕн, вĕри шывпа сивĕ шывăн коммуналлă ресурсĕсене шута илмелли приборсене нумай хваттерлĕ çуртсенче пĕтĕмпе вырнаçтарма кирлинчен 75 процент, заявкăна 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн парас пулсан – 100 процентчĕпех вырнаçтарса пĕтерни кирлĕ.

Чăваш Республикинчи муниципаллă пур районсемпе хула округĕсем те кашни енĕпех нумай хваттерлĕ çуртсенчен 75 процентне энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли приборсемпе тивĕçтерессипе Фонд условийĕсене пурнăçланă. Нумай хваттерлĕ çуртсенче энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсем вырнаçтарас ĕçсене 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме палăртнă.

**– Нумай хваттерлĕ çуртсенче энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсем вырнаçтарасси камăн тивĕçĕ пулса тăрать-ха?**

– Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн пурăнмалли çуртйĕр хуçисен нумай хваттерлĕ çуртсенче энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсем вырнаçтарас ĕçсене 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле пулнă.

Енчен те нумай хваттерлĕ çуртсенче асăннă срокчен ку ĕçсене туса ирттермен пулсан, 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен нумай хваттерлĕ çуртсенче энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсем вырнаçтарас ĕçсене ресурссемпе тивĕçтерекен организацисем пурнăçлаççĕ. Чăваш Республикинче ку ĕç пĕтĕмĕшле нумай хваттерлĕ çуртсенчи харпăрлăх хуçисен йышăнăвĕпе пулса пырать.

Нумай хваттерлĕ çуртсенче энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсене ресурссемпе тивĕçтерекен организаци вырнаçтарнă пулсан, Федераци саккунĕн 13-мĕш статйипе килĕшӳллĕн хваттер хуçисен пилĕк çул хушшинче прибор вырнаçтарма кайнă тăкаксене пĕр пек пайăн-пайăн тӳлесе татмалла. Енчен те хваттер хуçисем энергоресурссемпе усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборсене вырнаçтарасси пирки йышăну туман пулсан ресурссемпе тивĕçтерекен организаци тӳснĕ тăкаксене шыраса илессине тата шутлав приборĕсене нумай хваттерлĕ çуртăн пĕрлехи харпăрлăхне парассине суд урлă татса пама тивет. Кун пек тĕслĕхсем республикăра пулман-ха.

**Республикăра**

# Тĕл пулу теми – ĕç укçи

***Майăн 21-мĕшĕнче Чăваш Ен информаци политикин министерстви йĕркеленипе ытти хăш-пĕр министерствăсемпе пĕрле брифинг иртнĕ. Тĕл пулу теми – Раççей Президенчĕн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕсем мĕнле пурнăçланса пыни. Брифинга уçнă май ЧР информполитика министерствин ертӳçи Валентина Андреева çавна палăртнă. Брифинга йĕркеленин тĕп тĕллевĕ ку ыйтупа министрсем пĕлтернисене итлесси тата «Çул-йĕр карттисене» – малашлăхри çулсенчи аталану планĕсене пурнăçланин информацийĕсене уçăмлатасси пулса тăрать.***

Аталану мероприятийĕсене е «Çул-йĕр карттисене» ведомствăсем Раççей Президенчĕн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕсене пурнăçлассипе палăртнă пулнă.

Республикăра медицина тата социаллă ĕçченсен ĕç укçине ӳстерес ĕçсем тĕллевлĕ пурнăçланса пыраççĕ. Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова хыпарланă тăрăх хальхи вăхăтра врачсен ĕç укçи 2012 çулхипе танлаштарсан вăтамран 9,4 процент ӳснĕ, 25784 тенкĕпе танлашать. Вăтам медицина персоналĕн ӳсĕмĕ 8,7 процент (14717 тенкĕ), кĕçĕн медицина персоналĕн ӳсĕм шайĕ чи пысăкки – 36 процент (8817 тенкĕ).

2013 çул пуçланнăранпа учительсен ĕç укçи 10,9 процент тата воспитательсен 40,3 процент хăпарнă. Чăваш Ен вĕрентӳ министерствин пуçлăхĕ Владимир Иванов пĕлтернĕ тăрăх педагогсен уйăхри вăтам ĕç укçи 17363 тенкĕпе, шкул çулне çитмен ачапăча учрежденийĕсенче вăй хуракансен 14420 тенкĕпе танлашнă.

Культура министрĕ Вадим Ефимов çавăн çинчен чараннă. Культура учрежденийĕсенче вăй хуракансен ĕç укçине 3 тапхăрпа ӳстерме палăртнă: 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен, июлĕн 1-мĕшĕнчен тата октябрĕн 1-мĕшĕнчен. Хальхи вăхăтра культурăра вăй хуракансен вăтам ĕç укçи 9958 тенкĕпе танлашать. Республика учрежденийĕсен сотрудникĕсен вăл вăтамран 13 пин тенкĕ ытла, муниципалитетсенче – 8,5 пин тенкĕ ытла.

Итогсене пĕтĕмлетнĕ май министрсем çавна палăртнă. Раççей Президенчĕн иртнĕ çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕсене пурнăçлассипе республикăра ĕçсем активлă пыраççĕ. Туса хатĕрленĕ мероприятисен планĕсем чи малтанах уççăнлăхпа, влаç органĕсем çынсене тивĕçтерекен услугăсен эффективлăхĕпе тата пахалăхĕпе çыхăннă.

**Саламлатпăр**



Хаклă та юратнă аннепе аттене, кукамайпа кукаçие – Муркаш районĕнчи Мăн Шашкар ялĕнче пурăнакан **Регина Васильевнăпа Владимир Варсонофьевич МЕРЛОВСЕНЕ** çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче мăшăрланнăранпа 30 çул çитнĕ ятпа – ахах туйпа – чун-чĕререн саламлатпăр. Нумай-нумай çул килĕштерсе пурăнма ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Тăван кил ăшшине малашне те упрама турă вăй-хал патăр сире. Эпир сире çав тери хисеплетпĕр, юрататпăр.

**Саламласа: хĕрĕ, мăнукĕ, ывăлĕ, кинĕ, кӳршисем, тăванĕсем.**

Коллектив СХПК им. В.И. Чапаева поздравляет с 50-летним юбилеем бухгалтера кооператива **ВАСИЛЬЕВУ Валентину Николаевну**. Желаем самого крепкого здоровья, добра и счастья в семье и в коллективе. Пусть ваша душевная доброта и улыбка неиссякнут никогда. Мы все вами гордимся, любим и уважаем.

Юратнă та хисеплĕ çыннăмăра – Сарчак ялĕнче пурăнакан **Галина Варсонофьевна ПЕТРОВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, çемьере яланах килĕшӳ, тату пурнăç хуçалантăр. Утас çулу уçăлсах пытăр, кун-çулу вăрăм килтĕр. Турри пулăшса вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен, инккек-синкекрен упратăр. Телейлĕ пул! Эпир сана юрататпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, çывăх тăванĕсем.**


# Тариф «Республика»: платим только за первую минуту!

## Специальное предложение для жителей Чувашии

У каждого жителя Чувашии есть родные и близкие за пределами республики. И с каждым из них хочется общаться почаще – обмениваться новостями, рассказывать о делах домашних да и просто говорить по душам. Поэтому компания «МегаФон» предложила жителям Чувашии новый тариф «Республика» – для тех, кто активно общается с абонентами «МегаФона», живущими как в нашем регионе, так и в других областях России – от Калининграда до Хабаровска.

Арифметика расходов очень проста: после первой минуты разговора или первого SMS-сообщения в сутки ваше общение обойдется вам в 0 рублей. Первая минута разговора будет стоить 1,2 рубля.

У Марии Нестеровой из села Комсомольское сын живет в Москве, сестра – в Калининграде, а мама – в районном центре Чувашии. Все они – абоненты «МегаФона».

– Я подсчитала, что перейдя на этот тариф, смогу с каждым из них разговаривать ежедневно в среднем по 15 минут, – говорит Мария. – Еще 15 минут – потратить на звонки внуку – проконтролировать его до и после школы. И это – всего за 1 рубль 20 копеек! Целый час разговоров в день за такую цену – это просто подарок. А если проговорю больше 60 минут в день, ничего страшного – последующие минуты стоят те же рубль двадцать. И никакой абонентской платы!

Любителям писать SMS новый тариф тоже понравится: заплатив за первое SMS в день 5 рублей, далее можно отправлять бесплатные сообщения абонентам любого оператора мобильной связи Поволжья. Начиная со 101 сообщения, SMSабонентам других операторов в Поволжье будут стоить 1,15 рубля, абонентам «МегаФона» в Поволжье – 1,05 рубля, абонентам «МегаФон» всех остальных регионов (кроме Поволжья) – 1,95 рубля.

Тариф «Республика» продлевает общение. Присоединяйтесь!

Подробности о тарифе – на сайте www.megafon.ru и в салонах связи.


**ГИБДД пĕлтерет**

# Пурнăçа хакласчĕ

**Иртнĕ канмалли кунсенче пирĕн районти çул-йĕр çинче пачах та лăпкă пулмарĕ. Кашни кун – мĕнле те пулин авари. Юрать-ха никам та вилмен, анчах суранланнисем нумайăн.**

Шăмат кун, майăн 25-мĕшĕнче, 17 сехет çурă тĕлĕнче М–7 трасса çинче пулса иртнĕ аварире 6 çын суранланать. Ситуккасси çывăхĕнче пулнă авари пĕр машина хăйĕн умĕнче пыракан машинăна пырса çапăннипе пуçланать. Малта пынă машина хирĕç килекен транспорт речĕ çине тухса каять те, хыççăн пĕтĕмпех инерци майĕпе пулса пырать.

Тепĕр кунне ирпе Мăн Сĕнтĕр – Ильинка çул çинче ытла та пысăк хăвăртлăхпа пынă çăмăл машина Тренккă çывăхĕнчи чарăну павильонне пырса çапăнать. Машина пĕтĕмпех çунса каять, водителе больницăна леçеççĕ.

Çав кунах кăнтăрла Муркашри Чапаев урамĕнчи 59-мĕш çурт патĕнчен велосипедпа ярăнса тухакан икĕ ачана (6 тата 7 çултисем) çăмăл машина çапса каять. Çак инкек ачасем çул-йĕр правилисене пĕлменнипе, çапла вара пăхăнманнипе пулса тухать.

Çĕрле (ку майăн 27-мĕшĕнче пулнă) Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çул çинче тепĕр инкек пулса иртет: çул-йĕр хăрушсăрлăх правилине шута хумасăр çăмăл машина хирĕç килекен транспорт речĕ çине тухса кайса тепĕр машинăпа çапăнать. Çапла вара 7 çын суранланать, вĕсенчен иккĕшĕ – 18 çул тултарманнисем.

Çак кунах, çак çул çинчех – Çатракасси ялĕнче, 9 сехет çурă тĕлĕнче пысăк тиевлĕ машина водителĕ хăрушă çул курнине машинăна «тытса чараймасть» – 20 тонна вак чул тиенĕ машина çул хĕррине çавранса ӳкет. Водителе больницăна леçеççĕ.

**Çапла лару-тăру хуçаланнă пирĕн районта канмалли кунсенче. Хăварах куратăр, инкек кирек ăçта та, кирек кама та пырса тивме пултарать. Хамăрăн сывлăха, пурнăçа ытларах хакласчĕ, ыттисене те хăрушсăрлăхпа тивĕçтересчĕ.**

**ГИБДД материалĕсем тăрăх Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

